Ача çулталăкĕ

# Пурнăç пĕрре çеç килет



***Çĕнĕ чун çут тĕнчене килни – телей. Ашшĕ-амăшĕн тĕллевĕ вара - вĕсене сывă, тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстересси. Патшалăхăн - çак ĕçре пулăшасси. ЧР Президенчĕ, ав, 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе палăртрĕ. Ăна ятарлă Указпа çирĕплетни умри тĕллевсене пурнăçлама çул кăтартса парĕ.***

***Статистика тăрăх, халăх йышне пĕр шайра сыхласа хăварас тесен, кашни çемьере 3-4 ача пулмалла. Апла пулсан, çут тĕнчене çĕнĕ «кайăксен» самай вĕçсе килмелле. Районта ку енĕпе еплерех лару-тăру-ха? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн ЗАГС пай ертӳçине М.П. РУБЦОВАНА.***

**– Маргарита Петровна, демографи лару-тăрăвĕ майĕпен лайăх енне улшăнса пыни сисĕнет-и?**

– Кунта, паллах, татăклă хурав пама йывăртарах. Çын çурални, мăшăрланни, вилни пĕтĕмпех пирĕн пайра йĕркеленсе пырать. Иртнĕ çул 366 (355) ача çуралнă. Муркаш ял тăрăхĕнче 38, Москакасси ял тăрăхĕнче 34, Çатракасси ял тăрăхĕнче 31 ача кун çути курнă. Уйкас Янасал тăрăхĕнче сахалтарах, 11-ĕн çеç пулнă.

Çут тĕнчерен уйрăлнисен хисепĕ вара 664-на çитрĕ. Çак кăтарту уйрăмах Мăн Сĕнтĕр (69), Катькас (60), Муркаш (57) ял тăрăхĕсенче пысăк пулчĕ. Куратпăр ĕнтĕ, халăх йышĕ самаях чакать.

Çапах та пурнăç малаллах пырать. Çавăнпа та ăна йĕркеллĕ пурăнса ирттерме тăрăшмалла. Çамрăксен мăшăрланмалла, йыш хушмалла. Çĕнĕрен çемье çавăракансем йышланса пыни савăнтарать: пĕлтĕр, висĕм çулхипе танлаштарсан, районта 12 çемье ытларах чăмăртаннă. Çав хушăрах вара 59 çемье арканнă. Пурнăç япăх тесе ӳпкелешнипех лайăххи пулмĕ. Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр тесен, йăнăшсене вăхăтра тӳрлетме пĕлмелле.

**– «Демографи» проект пирки мĕн калана пулăттăр?**

– Çак проектăн тĕп тĕллевĕсем – ачасем çуратассине ӳстересси, вилекенсен йышне чакарасси, тăлăх ачасене йĕркеллĕ ӳсме условисем туса парасси. ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн республикăра ачасене пулăшмалли тĕллевлĕ программа хатĕрлеме палăртнă.

**– 2007 çул – Ача çулталăкĕ Муркаш районĕнче мĕнлерех пуçланчĕ тата 250 пин тенкĕ илмеллине çирĕплетекен свидетельствăна тивĕçекенсем пулчĕç-и?**

– Çĕнĕ çул пуçланнăранпа районти икĕ çемьере йыш хушăннине пĕлтĕмĕр. Вĕсем иккĕшĕ те район больницинче мар, район тулашĕнче çуралнă. Хальлĕхе çак çемьесем свидетельствăна тивĕçеймерĕç-ха, мĕншĕн тесен икĕ ачи те çемьере пĕрремĕш пулчĕç.

Вилнисен йышĕ вара 11 çынна çитрĕ.

Çулталăк анчах пуçланчĕха, ырă улшăнусем пуласса, Ача çулталăкĕ ăнăçлă иртессе шанас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Сăмах – медицина ĕçченне

# Сывлăха упрас пулать

Медицина паянхи куна хăвăрт аталанса пырать: чирсене çĕнĕ мелсемпе тĕпчеççĕ, чире хăйĕн пуçламăшĕнчех пĕтерме пултаракан эффективлĕ эмелсем кăлараççĕ, сипленĕ чухне вара тĕрлĕ мелсемпе усă курма май пур. Анчах та хăш-пĕр чирсемпе çакнашкал кĕрешме май çук. Вĕсем ăнсăртран пулса çын пурнăçне инкек илсе кĕреççĕ, медицина ĕçченĕсем умĕнче вара çын пурнăçне сыхласа хăварас тĕллев тухса тăрать.

Çакнашкал чиртен пĕри вăл – хĕрарăмсен матка тулашĕнче хырăм юлни. Тĕвĕленнĕ ача матка ăшне анас вырăнне матка трубкисенче, яичниксем çинче, вар ăшĕнче çирĕпленме пултарать. Çакăн пек чухне ача, тем вăхăт хушши аталансан та, малалла çитĕнме условисем çителĕксĕр - юн тымарĕсем кирлĕ чухлĕ юн çитерейместĕ. Çавна пула ача аталанăвĕ чарăнса ларать, каярахпа вара е çирĕпленнĕ вырăнтан уйрăлса вар-хырăма тухать (кун пеккине трубнăй аборт теççĕ), е ӳснĕçемĕн матка трубкине çурса ярать.

Çакăн пек чухне хĕрарăмăн пурнăçĕ хăрушлăхра, ăна нимĕн тăхтаса тăмасăр медицина пулăшăвĕ кирлĕ.

Мĕнле пĕлме пулать-ха хĕрарăмăн çак чир пуррине? Малтанах хĕрарăм уйăх хушши килменнине е пулмалли вăхăтра юн питĕ сахал пулнине асăрхать, çие юлнин пĕрремĕш паллисене туять. Каярахпа вара, матка трубки çурăлсан, хырăм айĕнче питĕ хытă чиксе ыратма пуçлать, вар-хырăма юн кайнă пирки юн пусăмĕ чакса каять. Хĕрарăм ура çинче тăраймасть, ун пуçĕ çаврăнать, хăсма пултарать, сăнĕ шуралса каять. Вăхăтра пулăшу памасан, хĕрарăм юн çухатнă пирки вилме пултарать.

Çакнашкал çие юлни трубнăй аборт пек аталанать пулсан, чир нумайрах вăхăта тăсăлать: ача тĕвви уйрăлса пынăçемĕн юн майĕпен вар-хырăма тулать, амалăхран тула тухать. Хĕрарăм хырăм вăхăтăн-вăхăтăн туртса ыратнине, хăйне япăх туйнине асăрхать. Енчен те 2-3 кун хушшинче хĕрарăм пулăшу илеймест пулсан, унăн пурнăçĕ каллех хăрушлăхра.

Мĕнле кĕрешмелле-ха çак чирпе? Хĕрарăмăн питĕ асăрханулла пулмалла, çие юласран шанчăклă меслетсемпе усă курмалла, уйăх хушшисем вăхăтра килнине сăнаса тăмалла. Енчен те уйăх хушши вăхăтра килмерĕ пулсан, тӳрех тухтăрсем патне пымалла, вĕсем сире яланах пулăшма тăрăшĕç. Вара нумай-нумай инкеке сирме пулать. Сирĕн сывлăх сирĕн алăра, хаклă хĕрарăмсем.

**Н. ЛОБАЧЕВА.**

Спорт

## «Оринино» хуçалăх парнисемшĕн

Январĕн 20-мĕшĕнче Орининти вăтам шкулта волейболла, шахматла тата шашкăлла выляссипе «Оринино» хуçалăх парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем иртеççĕ. Ăмăртусем 10 сехетре пуçланаççĕ.

Ăмăртусене ял хуçалăх производство кооперативĕсен, предприятисен, учрежденисен тата шкулсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ. Волейболистсен командинче 9 çын, шахматла тата шашкăлла вылякансен командисенче 2-шер арçынпа 1-шер хĕрарăм пулмалла.

Командăсем хушшинче пĕтĕмĕшле 1-мĕш вырăн йышăннă команда «Оринино» хуçалăхăн куçса çӳрекен кубокне, 1-мĕш степень диплома тата укçан парнене тивĕçет, 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсем йышăннисене дипломсемпе укçан парнесем параççĕ. Спортăн уйрăм тĕсĕсемпе палăрнă спортсменсене те Хисеп грамотисемпе тата укçан парнесемпе хавхалантарма пăхнă.

Милици хроникинчен

## Çын пурлăхĕ илĕртӳллĕ-и?

Иртнĕ кунсенче асатте-асаннесем пысăк ĕçсене тăванпĕлĕшсемпе, пускилсемпе пурнăçланă. Вĕсене вĕçлесен вара пĕр-пĕрин патне пухăнса савăнма та пĕлнĕ. Пур - пĕрле, çук - çурмалла, тенĕ ун чухне. Вăрласси çинчен шутлама та вăтаннă.

Паянхи цивилизаци тапхăрĕ пурнăçа улăштарчĕ пулас. Ав, хăшне-пĕрне хăнара та вăрлас шухăш канăçсăрлантарать. Акă, январĕн 4-мĕшĕнче Кашмаш ялĕнчи пĕр çуртран «Нокия-6131» маркăллă телефон «ураланнă». Ак, тамаша, çĕмĕрсе кĕрекен пулман! Анчах та ăçта пытаннă телефон? Ку ĕç пирки милиционерсене пĕлтерме тивнĕ. Кăсăруклисем вара нумай кĕттермен. Часах çав пӳтсĕре тата телефона тупса палăртнă. Вăрлаканĕ Муркашра пурăнакан 1989 çулта çуралнă çамрăк пулнă иккен.

## Ах, çав пӳтсĕр валли ӳсрĕн-ши?

Çыннăнне хапсăнни ырри патне илсе çитерменнине пурте лайăх пĕлетпĕр-ха. Анчах та вăрлани часах пыра ларни пирки манатпăр.

Ятман ялĕнчи пĕр хуçалăхри кинемейĕн шурă тĕслĕ хурĕ ирирех ăшă еннелле çул тытнă пулас. Ак, тамаша, инçе те вĕçеймен иккен. Çак ялта 1989 çулта çуралнă каччăн ытла та выçса çитнĕ «хуранне» кĕрсе ӳкнĕ. Çак çăмăлттай яш ĕçре е вĕренӳре пиçĕхет тесе пачах та ан шутлăр. Вăл пи-и-тĕ канма тата тутлă çиме кăмăллать. Çапах та халĕ, хăйне палланăран, пичĕ шурă хурăн хĕрлĕ ури тĕслех пулса кайнă теççĕ.

## Мĕн-ши вăл килĕшӳ, ăнлану?

Эпĕ сăмахăма малалла та Ятман ялĕнче пурăнакансем пирки ех тăсам-ха. Ара, сăлтавĕ те пур. Январĕн 1-мĕшĕнче 1 сехетре 1988 тата 1984 çулсенче çуралнăскерсем ытла та хĕрсе кайнă пулас. Хĕрӳлĕхе кăтартас тĕллевпе пĕр хуçалăхăн пахча картине 50 метр тăршшĕ çапса хуçса пĕтернĕ. Сиен хакĕ 5 пин тенкĕпе танлашнă. Çын пурлăхне, ĕçне хаклама пĕлменскерсем тепĕр хуçалăхра та 50 метр тăршшĕ картине çав мелпех ватнă. Кунта та 5 пин тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Хăйсен вăйне хуçалăх ĕçĕнче кăтартсан самай усăллă пулнă пулĕччĕ те-ха.

Çак юлташсенчен пĕри, 1984 çулта çуралнăскер, намăса пачах çухатнăскер, Ятман ялĕнчи пĕр хуçалăх котельнăйне кĕнĕ. Кунта пурăнаканпа хирĕçӳ кăларнă, тапса-çапса пĕтернĕ. Йывăр суранланнăскерне больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерме тивнĕ.

Каплах пулсан, мĕн патне çитсе пыратпăр-ха эпир? Енчен те паян хирĕçсен, ыран пулăшу камран ыйтмалла?

**Районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, ырă кăмăллă аттене, хуньстарике, асаттене, Нискассинче пурăннă Герман Николаевич Осипова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул коллективне, районти вĕрентӳпе çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне, ун çумĕнчи спорт шкулĕн коллективне, Муркаш районĕнчи физкультурăпа ОБЖ вĕрентекенсене, Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхне Г.В. Пайгусова, Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче ĕçлекенсене, сывăх тăванăмăрсене, ял-йыша, пускилсене чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашпа тата чĕрĕ висепе пуçтаратпăр.**
**Тел.: 60-7-10, 8-927-848-17-06. 4-4.**

**ИП «Иванов» предлагает населению и предприятиям-организациям оконные и дверные блоки, балконные рамы по индивидуальным заказам по договорной цене. Изготовляем деревянные евроокна с двухкамерным стеклопакетом. Цвет по желанию заказчика. Производим резку стекла по вашим размерам. Предоставляются новогодние и рождественские скидки 10 процентов до 31 января 2007 года.**
**Тел.: 8-905-346-81-95, 8-906-130-92-99. 7-10.**

**Спутниковое телевидение от 21 до 1200 каналов. От 4,5 до 6,5 тыс. руб., с установкой.**
**Тел.: 8-906-385-29-30, 8-927-666-93-95, 2-18-48 (после 18 часов).**

**Ильинское лесничество Опытного лесхоза проводит лесной аукцион по продаже готовой продукции (хлысты), мягколиственной породы. Аукцион состоится в конторе Ильинского лесничества 10 часов 23 января 2007 года, за справками обращаться в контору Ильинского лесничества.**
**Администрация Опытного лесхоза.**

**Пĕр хут пăрулană сумалли ĕне сутатпăр. Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕ, Ю.Г. Петров.**
**Тел.: 39-2-51.**

**Продаю лес – хвоя, диаметр - 30 см., длина - 8 м. - 9 шт. ВАЗ-2104-3, белый, 1993 г.в. срочно, дешево.**
**Тел.: 8-927-865-21-95. Юрий Вязов.**

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашпа тата чĕрĕ висепе пуçтаратпăр.**
**Тел.: 38-2-89, 8-909-304-08-81.**

**Предлагаем керамзитобетонные блоки пропаренные; цемент, шифер, рубероид, песок речной, гравмассу, керамзит. Доставка бесплатно. Предлагаем транспортные услуги.**
**Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02, 8-927-851-47-82.**


СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ нумай çул хушши çак хуçалăхра бухгалтер пулса ĕçленĕ

**Елизавета Куьминична**
**ЕГОРОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Нискассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Н.И. Осипова мăшăрĕ, çак шкултах физкультура учителĕ пулса ĕçленĕ

**Герман Николаевич**
**ОСИПОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе, çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Юбилей

# Пурнăçа сăвă йĕркисенче çутатать

**Василий Максимова хаçат вулакансенчен чылайăшĕ аван пĕлет. Унăн сăвă хайлавĕсем район хаçатĕнче пĕрре мар пичетленнĕ. Вăл Шашкар тăрăхĕнчи Анаткас Шатракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. 3 çул çарта пулнă хыççăн Шупашкарта педагогика институтне вĕренсе пĕтернĕ. Шатракасси, Калайкасси, Шомик шкулĕсенче, Каршлăхра вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ, Украинăра та ĕçленĕ, Шатракассипе Калайкасси шкулĕсен директорĕнче те вăй хунă, пĕр вăхăт районти вĕрентӳ пайне те ертсе пынă. Мăшăрĕпе вĕсем икĕ ывăл пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă.**

**Сăвă çырас туртăма вара вăл пурнăç тăршшĕпех сыхласа хăварнă. Тăван ен историйĕпе интересленет.**

**В. Максимов çак кунсенче хăйĕн 65 çулне паллă тăвать. Вулакансене паян унăн хăш-пĕр хайлавĕсене сĕнетпĕр.**

### Ăçта эсĕ, анне?

Пурнăç кустăрми хăварчĕ
Ылханнă йĕр чĕрем çине.
Çиллĕм тăвăнса пăртарчĕ –
Çухатрăм эп анне йĕрне.
Эс ăçта кайса çухалтăн?
Ма мана пĕччен хăвартăн?
Сан куçна тулли пулмарăм,
Ют çынна куçран сăнарăм.
Епле хитреччĕ аннен пичĕ,
Ман аллăмсем шыратчĕç чĕчĕ...
Епле пылакчĕ унăн сĕчĕ...
Анне таçта кайса çухалчĕ?!
Эп халь инçет океан урлă
Тупайрăм иккĕмĕш çемье.
Атте-анне ман питĕ пурлă,
Вĕсемшĕн эп чĕр пукане.
Эп ним çуккишĕн кулянмастăп.
Эп каласан, ман пурте пур.
Анчах сана эп манаймастăп,
Анне, анне, эс пурах, пур!
Килсем, ларсам эс çума-çумăн,
Сана ыталăп эп мăйран.
Океан шавлĕ шурă хумлăн,
Эс ачашла питрен, куçран...
Епле хитреччĕ анне пичĕ,
Епле пылакчĕ чĕчĕ сĕчĕ...
Таçта çухалчĕ халĕ пичĕ,
Çăвар йӳççийĕ сивĕ сĕчĕ.

### Ачашла мана

Санăн йăлтăр куçусем
Сапрĕç çунтарса хĕмсем.
Пăшăлтатрĕç тутусем,
Юн вылятрĕç аллусем.
Ачашла эс, ачашла,
Вырăсла мар, чăвашла:
Пуç çаврăрса – пуçăмран,
Ыр кăмăлпа – çурăмран.
Пиçнĕ палан сăн-питӳ,
Яштака юман пĕвӳ.
Ытамрах, ман ытамрах.
Ют куçран, Турă, пăрах.
Ачашла эс, ачашла
Нимĕçле мар, чăвашла:
Килĕшет пулсан – мăйран,
Питĕ çепĕç – тутамран.
Хĕрӳллĕ çав ытаму,
Пĕçерет вĕри аллу.
Чĕрем пасăрах кĕтет:
Ман санпа пулас килет.
Ачашла эс, ачашла
Чăвашла çав, чăвашла:
Куçран пăхса, йăл кулса,
Ик хăлхаран лăскаса,
Каллĕ-маллĕ çавăрса,
Тăпăртатса ташласа,
Хăв çумна пăчăртаса,
Чĕвĕн тăрса чуп туса.

### Сан сивĕ туту...

Сан сивĕ туту мана ăшăтмарĕ,
Калаçу та шăкăл-шăкăл пулмарĕ.
Ман йĕре шăпăрпах эсĕ шăлтăн –
Чĕрĕк ĕмĕр тертрен мана çăлтăн.

Тавтапуç, ах, тесе кĕвĕçместĕп,
Иртнине тарасапа виçместĕп.
Шухăшпа эп таçта та çитетĕп,
Пулнине кăмăлпа асилетĕп:

Пирĕн чунăм кĕçех авланать вăл –
Хĕрӳ туйăм юлташĕ çав ывăл.
Пытарса нумай çул усрасан та
Михĕре çухалмасть йĕп пулсан та...

Малаллах талпăнатăр, ав, иксĕр.
Эс ăна ан ятлаччĕ: «Ах ирсĕр!..»
Хушăран, тен, мана вăрçса илĕр,
Сив палка хушшине çеç ан чикĕр.

Сывă пулăр теме хăяймастăп,
Пырса курăр тесе йăлăнмастăп,
Туйăмпа тек хама йăпатмастăп,
Шал енчен алăка та хупмастăп.

Çĕрĕпех тӳшекӳ чĕмсĕр пулчĕ.
Юмахлу хутаççи те ак тулчĕ.
Килнĕ йĕр каялла илсе кайрĕ,
Хыçалта çил ачи çеç пуç тайрĕ.


ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Заместитель гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3472.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 12.01.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.